# ЧӐВАШ ЧӖЛХЕ ПӖЛӖВӖНЧИ ЧИ ПЫСӐК УТӐМ

*(Н. И. Ашмарин профессор ҫуралнӑранпа 90 ҫул тултарнӑ май).*



Кӑҫал, октябрӗн 5-мӗшӗнче, чӑваш чӗлхин паллӑ тӗпчевҫи, пысӑк тюрколог, СССР Наукӑсен академийӗн член-корреспонденчӗ Николай Иванович Ашмарин профессор ҫурални 90 ҫул тултарчӗ. Унӑн кун-ҫулӗ, тӗпрен илсен, чӑвашсем хушшинче иртнӗ.

Ҫураласса вӑл Етӗрне хулинче вырӑс ҫемйинче ҫуралнӑ. Анчах унӑн пӗтӗм ачалӑхӗ, ашшӗ-амӑшӗсем кукамӑшӗ патне куҫса кайнине пула, Кӑрмӑш хулинче иртнӗ. Ҫамрӑк ача хулана пынӑ чӑвашсен чӗлхипе кӑсӑкланнӑ пулин те, чӑвашла калаҫма вӗренсе ҫитеймен. Чулхулари гимназире чух француз, латин чӗлхисене ҫине тӑрса вӗреннӗ. Гимназирен вӗренсе тухнӑ вӑхӑталла тин, чӑваш чӗлхи тӗпчевҫи Н. И. Золотницкий ҫырнӑ кӗнекесене илсе вуласан, ҫамрӑк Ашмаринӑн чӑваш чӗлхине вӗренес пысӑк кӑмӑл ҫуралать. Автобиографийӗнче вӑл Н. И. Золотницкий ҫырнӑ чӑвашла-вырӑсла словарь пысӑк пулӑшу пани ҫинчен ҫырать, ҫав вӑхӑтрах словарьте ҫырулӑх (графика) тӗлӗшӗнчен чӑваш сӑмахӗсене тӗрӗсех палӑртайманнине асӑрхаттарса хӑварать. Ҫак ҫитменлӗхе вӑл чӑвашсен калаҫӑвне тинкерсе итленӗ май асӑрхаса пуҫланӑ. Ку словарь урлах Н. И. Ашмарин чӑваш чӗлхине тӗплӗн пӗлме тутар, мари, мордва, удмурт чӗлхисене вӗренмеллине те лайӑх ӑнланнӑ. Тутарла вӗренес тесе, тутар кӗнекисене нумай вуланӑ. Гимназире араб, перс, тӗрӗк чӗлхисене вӗрентмен пулин те, Н. И. Ашмарин гимназист вӑл чӗлхесене те хӑй тӗллӗн вӗренме тытӑннӑ.

Каярахпа, Мускава хӗвелтухӑҫ чӗлхисен Лазарев институтне кӗрсен, Н. И. Ашмарин ытларах тӗрӗк чӗлхине тимлесе вӗренет. Чӑваш чӗлхипе хурӑнташлӑ чӗлхесене лайӑх пӗлмеллине Николай Иванович студент чухнех аван чухланӑ. Пӗрремӗш курсрах вӑл, И. Н. Юркин пухнӑ чӑваш халӑх юррисемпе усӑ курса, «Очерк народной поэзии у чуваш» ятлӑ статья ҫырса журналта пичетлет.

Ашмарин халӑх поэзине тӗпченӗ май, чӑваш чӗлхи пуянлӑхне те сӑнама тытӑнать. Ӑна ку таранччен чӑваш чӗлхи ҫинчен пӗлни питӗ ҫителӗксӗррӗн туйӑнать. Ҫавна курах институтра юлашки курсра вӗреннӗ чух (1893 ҫ.) Н. И. Ашмарин чӑваш чӗлхи фонетикипе морфологийӗ ҫинчен материал пухма тытӑнать. Ку материала вӑл, Хусана ӗҫлеме куҫсан, йӗркелесе ҫитерет те 1898 ҫулта пӗр пысӑк кӗнеке «Материалы для исследования чувашского языка» ятпа пичетлесе кӑларать. Ҫирӗм сакӑр ҫулхи ҫамрӑк тӗпчевҫӗ чӑваш чӗлхи ҫинчен ҫавӑн пек пысӑк та пархатарлӑ ӗҫ ҫырса кӑларни тӗлӗнтермӗш япала шутланать. Ӑна хатӗрлесе ҫитерме мӗн чухлӗ пӗлӳ, мӗн чухлӗ чӑтӑм кирлӗ пулнӑ! Кӗнеке тухнӑранпа 60 ҫул иртнӗ пулин те, хамӑр ҫӗршыври тюркологсем те, ытти ҫӗршывсенчи тӗпчевҫӗсем те Н. И. Ашмаринӑн кӗнекине алран ямаҫҫӗ, унӑн материалӗсемпе тухӑҫлӑн усӑ кураҫҫӗ. Н. И. Ашмарин хӑйӗн ӗмӗрӗнче пӗр ҫак кӗнекене ҫеҫ ҫырса кӑларнӑ пулнӑ пулсан та, ӑслӑлӑх тӗнчинче, тюркологи историйӗнче манми те пысӑк вырӑн йышӑннӑ пулӗччӗ. Анчах чӑваш чӗлхи тӗпчевҫин пысӑк та паллӑ ӗҫӗсенчен пӗррӗмӗшӗ ҫеҫ шутланать-ха.

Н. И. Ашмарина пӗр хальхи вӑхӑтри чӑваш чӗлхи ҫеҫ мар, унӑн историйӗ те интереслентерме тытӑнать, 1902 ҫулта «Болгары и чуваши» ятлӑ кӗнеке пичетлесе кӑларать. Ку кӗнекере вӑл Атӑл ҫинчи тата Дунай ҫинчи пӑлхарсемпе чӑвашсем мӗнле ҫыхӑнура тӑни ҫинчен ҫырать, авалхи пӑлхар чӗлхин ҫыру памятникӗсене анализлет. Авторӑн тӗп шухӑшӗ — чӑваш чӗлхи угро-финн чӗлхисемпе мар, пӑлхар чӗлхипе хурӑнташлӑ, тенӗ. Ку шухӑша вӑл нумай енлӗ кӑтартса парать, чылай фактсемпе ҫирӗплетет.

Ку темӑпа Николай Иванович кайран та интересленме пӑрахман: 1905 ҫулта унӑн «Об одном мусульманском могильном камне в загородном архиерейском доме в Казани» ятлӑ статьи, 1923 ҫулта «Несколько слов о труде I. I. Mikkola «Хронология дунайских болгар» ятлӑ статья, 1928 ҫулта «Болгарские надписи, найденные около села Токмакла» ятлӑ статьи пичетленсе тухать.

Н. И. Ашмарин чӑваш чӗлхи историйӗ ҫинчен ҫырнӑ ӗҫӗсене тюркологсем халӗ те пысӑка хураҫҫӗ.

Хусанта тепӗр ҫулнех, 1903 ҫулта, Н. И. Ашмаринӑн татах пысӑк ӗҫ пичетленсе тухать —«Опыт исследования чувашского синтаксиса» (часть первая) ятлӑ кӗнеке. Ку ӗҫре автор чӑваш чӗлхинчи падеж, хисеп, причасти формисен пӗлтерӗшӗсене, хӑшпӗр пӑхӑнуллӑ предложенисен тӗсӗсене, хутсӑр предложенири сӑмахсен йӗркине анлӑн ҫутатса кӑтартнӑ. Кун евӗрлӗ монографи вӑл вӑхӑтра тюрк чӗлхисемшӗн пӗррӗмӗш шутланнӑ. Апла пулин те чӗлхе формисен пӗлтерӗшӗсене питӗ тӗплӗ те тӗрӗс уҫса панӑ.

Ку ӗҫӗн тепӗр пайӗ Чӗмпӗрте 1923 ҫулта пичетленсе тухнӑ.

Хусана пырсан пӗр-ик ҫултанах Н. И. Ашмарин чӑваш чӗлхин пысӑк словарьне хатӗрлес тӗллев те лартнӑ. Ку тӗлӗшпе вӑл чи малтанах словарь валли материал пухма программа пичетлесе кӑларнӑ. Программӑна чӑваш интеллигенчӗсем кӑмӑлласах йышӑннӑ: ӑна материалсем ярса пама тытӑннӑ. Н. И. Ашмаринӑн активлӑ корреспонденчӗсем хушшинче И. Н. Юркин, А. В. Рекеев, Г. Т. Тимофеев, И. Е. Ефимов т. ыт. те ячӗсене те асӑнма юрать. Пуринчен ытла И. Я. Яковлевпа Ф. Н. Никифоров хӑйсен вӗренекенӗсем пухнӑ фольклор материалӗсене нумай тӑратнӑ. Унсӑр пуҫне Н. И. Ашмарин хӑй те чӑвашсем хушшинче чылай пулнӑ, ҫӗнӗ сӑмахсемпе вӗсен пӗлтерӗшӗсем ҫинчен ыйтса тӗпчесе ҫӳренӗ. 1910 ҫул тӗлне словарь материалне, тӗпрен илсен, пухса ҫитерсе йӗркене кӗртнӗ пулнӑ. 1910—12 ҫулсенче А саспаллипе пуҫӑнакан сӑмахсен словарьне 2 томпа кӑларнӑ. Тюркологсем ку словаре хапӑл тусах йышӑннӑ. Анчах реакци тапхӑрӗнче словарӗн малалли пайӗсене пичетлеме чарнӑ, «чӑвашсене унашкал словарь кӑларма иртерех-ха», тенӗ. Октябрь революцийӗ хыҫҫӑн тин словаре кӑларма май килнӗ.

Малтанхи вӑхӑтра словаре Н. И. Ашмарин 30 томпа кӑларма палӑртнӑ пулнӑ, Анчах, авторӑн сывлӑхне пула тата ытти сӑлтавсем пирки сӑмахсене латинла, тӗслӗхсене вырӑсла куҫарнисӗрех пичетлемелле пулса тухнӑ. Апла пулин те 17 томпа кӑларнӑ словарь Ашмаринӑн чи пысӑк та паха ӗҫӗ шутланать, халӑхӑн культура строительствишӗн тата чӗлхе наукишӗн питӗ кирлӗ пуянлӑх пулса тӑрать.

Н. И. Ашмарин чӑваш сӑмахӗсен пуянлӑхне ҫеҫ мар, фольклор пуянлӑхне те пухнӑ, тӗпченӗ. Ку тӗлӗшпе унӑн «Сборник чувашских песен, записанных в губерниях Казанской, Симбирской и Уфимской» (1900) тата «Ваттисем каланӑ сӑмахсем» (1925) ятлӑ кӗнекисене палӑртса хӑвармалла.

Тӗпчевҫӗ Ашмарин, 1914 ҫултан пуҫласа, тюркологишӗн ҫӗнӗ ыйту хускатать. Унӑн ҫине-ҫинех чӑваш чӗлхинчи, Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсен тата ытти халӑхсен чӗлхисенчи евӗрлев сӑмахӗсем пирки тӗпчев ӗҫӗсем пичетленсе тухаҫҫӗ. («Основы чувашской мимологии», 1918; «Подражание в языках Среднего Поволжья», 1925—26; «О морфологических категориях подражаний в чувашском языке», 1928; «Немецкое «Schlange» в свете урало-алтайских подражательных образований», 1928; «К вопросу о происхождении латинского названия свинца», (1930). Ку темӑпа юратса ӗҫлени ҫӳлерех асӑннӑ «Чӑваш сӑмахӗсен кӗнекинче» те курӑнать: кунта евӗрлев сӑмахӗсене нихӑш словарьтинчен те туллирех панӑ. Тен, кӑсӑкланса ӗҫленипех пулӗ, ҫак евӗрлев сӑмахӗсене автор ытлашши пысӑк вырӑна хума пуҫланӑ, чӗлхери сӑмахсем пулса кайни ҫинчен диалектика материализмӗ вӗрентнӗ пек мар, урӑхларах ҫирӗплетсе калама пуҫланӑ. Тӗп вывочӗ тӗрӗс мар пулин те, Н. И. Ашмарин евӗрлев сӑмахӗсем ҫинчен пухнӑ материал халӗ те хӑйӗн пахалӑхне ҫухатман. Ун ҫинчен ытти тӗпчевҫӗсем те асӑрхаттараҫҫӗ.

Эпир Н. И. Ашмаринӑн чи паллӑ ӗҫӗсене палӑртрӑмӑр. Асӑннӑ ӗҫсемсӗр пуҫне Ашмарин тутар чӗлхипе азербайджан чӗлхи ҫинчен те ятарласа статьясемпе кӗнекесем ҫырнӑ. Тюркологсен I съездӗнче (1926 ҫ.) вӑл программӑллӑ доклад туса панӑ («Кое-что о прошлом тюркологии и ее настоящем состоянии»). Пӗтӗм тюрк чӗлхисене танлаштарса ҫырнӑ ӗҫе те манса хӑвармалла мар: Хусанта 1928 ҫулта унӑн лекцийӗсен материалӗ «Заметки по сравнительной грамматике тюркских языков» ятпа пичетленсе тухнӑ.

Н. И. Ашмаринӑн тӗпчев ӗҫӗнче нумай паха енсем пуррине куратпӑр. Тӗслӗхрен, чӗлхе правилисене вӑл нихҫан та фактсене шута илмесӗр ҫырман. Вӑл чи малтан тӗслӗхсем питӗ нумай пухнӑ, сӑнанӑ, кайран тин вывод тунӑ. Илсе пӑхар-ха «Опыт исследования чувашского синтаксиса» ятлӑ кӗнекине е «Чӑваш сӑмахӗсен кӗнекинчи» статьясене. Пӗр-пӗр формӑн е сӑмахӑн пӗлтерӗшӗсене тупса, уҫса пама вӑл тепӗр чух 30—40 тӗслӗх те илет. Хӑшӗсем ҫакӑн пек ӗҫленине ҫитменлӗх тесшӗн. Ку вӑл тӗпчевҫӗн ҫитменлӗхӗ мар, тӗпчевҫӗн чӑтӑмлӑхӗ, пултарулӑхӗ пулса тӑрать. Ҫав тӗслӗхсем тӗпчевҫӗ тӗрӗс шухӑшланине ҫирӗплетекен, ӗнентерекен фактсем шутланаҫҫӗ. Ашмарин тупнӑ е палӑртнӑ пӗлтерӗшсем,— сӑмах пӗлтерӗшӗ-и вӑл е аффикс пӗлтерӗшӗ, пурпӗрех,— питӗ тӗрӗс, вӑл нихҫан та йӑнӑшмасть. Синоним формӑсем е конструкцисем хушшинчи уйрӑмлӑха питӗ ӑста палӑртать. Тӗслӗхрен:

1. Эпӗ **пичче** пурттине катрӑм.
2. Эпӗ **пиччен** пурттине катрӑм.
3. Пурттине эп **пичченӗнне** катрӑм.

Малтанлӑха пурте пӗр пӗлтерӗшлӗ пек туйӑнаҫҫӗ. Анчах Н. И. Ашмарин вӗсем уйрӑмрах пӗлтерӗшлӗ пулнине питӗ тӗрӗс палӑртать. Вырӑсла куҫарсан вӑл ҫапла пулса тухать:

1. Я изломал дядин топор.
2. Я изломал у дяди топор.
3. Топор я изломал дядин.

Е тата словарьти **кай** сӑмаха илер (VI кӑларӑм). Ку сӑмахӑн пӗлтерӗшӗсем вӑтӑртан та иртеҫҫӗ.

Сӑмахӑн ҫакӑн чухлӗ пӗлтерӗшне тупма тӗслӗхсемсӗр, паллах, май пулас ҫук. Вӑл тӗслӗхсене тупма унӑн темӗн чухлӗ кӗнеке тата алҫырӑвӗ вуласа тухмалла, корреспонденчӗсем патне ҫырусем ҫырма пулнӑ.

Акӑ, тӗслӗхшӗн, Н. И. Ашмарин 1898 ҫулта И. Н. Юркин патне янӑ ҫырӑвнех илер (ӑна вӑл чӑвашлах ҫырнӑ): «...Халӗ эпӗ пушӑ вӑхӑтра чӑвашла словарь валли материал пуҫтаратӑп, халӗ те питӗ нумай ҫырнӑ, анчах тата нумай ҫырасси пур-ха, мӗншӗн тесен, аван-тарах ҫырас тесен, тата чӑваш ялӗсене кайса ҫӳрес пулать, эпӗ халиччен чӑвашсем пурӑнакан уессене, нумайӑшне, кайса та пӑхман. Санӑн хӑвӑн пушӑ вӑхӑт пулсассӑн, эсӗ турӑ пул, ман валли акӑ мӗн ҫырса яр: чӑвашла курӑк ячӗсене, вӗҫен кайӑк ячӗсене, унтан тата вӑрманти тӑват уราллӑ кайӑксемпе пулӑсен ячӗсене. Ҫаксене ҫырса ярсассӑн, эпӗ сана темӗн тӗрлӗ тавтапуҫ тийӗттӗм»[1].

Ҫапла ӗнтӗ, Н. И. Ашмарин чӑваш наукишӗн тата тюркологишӗн питӗ нумай енлӗ ӗҫ тунӑ. Унччен чӑваш чӗлхе пӗлӗвӗнче тунӑ ӗҫсен ӳсӗмӗпе танлаштарсан, Н. И. Ашмарин ӗҫне калама ҫук пысӑк утӑм темелле. СССР Наука Академийӗсен член-корреспонденчӗ, Чӑваш АССР наукӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Н. К. Дмитриев профессор: Н. И. Ашмаринӑн «Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки» тата чӑваш чӗлхин фонетикипе, морфологийӗпе, синтаксисӗпе питӗ тӗплӗ ҫырнӑ ӗҫӗсем вырӑс чувашеведенине тӗнчере чи пӗррӗмӗш вырӑна тӑратрӗҫ,— тенӗ.

Наука ӗҫӗсене Н. И. Ашмарин вӗрентӳ ӗҫӗпе пӗр вӑхӑтрах туса пынине шута илсен, куҫ умне улӑпӑнни пек вӑй-халлӑ ҫын тухса тӑрать. Николай Иванович малтанхи вӑхӑтра тӗне кӗнӗ

[1] Наукӑпа тӗпчев институчӗн архивӗ, 49 т., 65 стр.

